Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

57 (7374) № ✻ Юн кун, 2006 çулхи июлĕн (утă) 12-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Симĕс ĕç çи

Сенаж ытлă-çитлĕ пулĕ

Çу кунĕсем – симĕс апат ытлă-çитлĕ хатĕрлесе хăвармалли вăхăт. Çавна шута илсе ООО «Агрофирма «Рассвет» пĕрлешӳллĕ хуçалăхра сенаж хатĕрлес енĕпе çине тăраççĕ.

Мăн Тутаркассинче пĕр траншейăна тултарнă ĕнтĕ. Халĕ механизаторсем Вомпăкассинче вăй хураççĕ. Михаил Костяров КамАЗ автомашинăпа, Александр Прокопьев, Владимир Одинцов, Геннадий Адамов ГАЗ-53 автомашинăсемпе симĕс массăна сенаж хывнă çĕре вăхăтра турттарса тăраççĕ.

Николай Буронов симĕс массăна пусăрăнтарать. 1979 çултанпа тракторпа вăй хураканскер, хăйĕн ĕçне пĕлсе, тĕплĕ пурнăçлать.

Василий Толстов механизатор та кунтах вăй хурать. 10 çул ытла вăл трактор рулĕ умĕнче. Çĕнĕ «Беларусь-922» трактор шанса панă ăна. Юсавлă тытма тăрăшать ăна вăл, тухăçлă ĕçлеттерет.

Сăн ӳкерчĕксенче: Николай Буронов, Василий Толстов механизаторсем; сенаж хывас ĕç анлă сарăлнă.

В. ШАПОШНИКОВ.

Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.

Район администрацийĕнче

Хисеп грамотине тивĕçнĕ

Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2006 çулхи июлĕн 10-мĕшĕнчи 184 № йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн Муркаш почтамчĕпе выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци коллективĕсем ыйтнине тивĕçтерсе, район администрацийĕн пуçлăхĕн йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

Любовь Витальевна АЛЕКСАНДРОВАНА, Муркаш почтамчĕн бухгалтерне;

Нина Вениаминовна АЛЕКСЕЕВАНА, почта çыхăнăвĕн Йӳçкасси уйрăмĕн почтальонне;

Раиса Алексеевна ВАРЛАМОВАНА, Муркаш почтамчĕн почтальонне;

Римма Германовна МУРАВЬЕВАНА, Муркаш почтамчĕн çыхăну операторне.

Николай Семенович ЯКОВЛЕВА, «Выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци» предприяти пуçлăхне.

Аталану çулĕпе

А.П. Давыдов: «Чи кирли – клиентсен кăмăлне тивĕçтересси»

Пуянланать, илемленсе пырать Муркаш. Çулсеренех çĕнĕрен те çĕнĕ çуртсем çĕкленеççĕ. Киввисем те çĕнелсе хăйсен сăн-сăпатне улăштараççĕ. Акă, халăхри пек каласан, халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен çурт аякранах çиçсе-çуталса ларать. Тултан çеç-и? Шала кĕрсен те тухас килмелле мар унтан. Хитрелĕхĕшĕн çеç мар. Кашни клиентпа тимлĕ унта ĕçлекенсем, калаçасса та кăмăллă калаçаççĕ.

Чăннипех те, юлашки çулталăк çурăра "Моргаушрайбыт" чикĕллĕ яваплăхлă общество тĕпрен çĕнелсе улшăнчĕ. Производство кăтартăвĕсем те курăмлăн çӳлелле çĕкленсе пыраççĕ. Пĕр япала çеç улшăнмарĕ кунта: халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен çуртăн малтанхи профилех сыхланса юлчĕ. Кунта вара асăннă предприятин паянхи ертӳçишĕн А.П. Давыдовшăн ашшĕн Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕн, "Ударник" хуçалăха 30 çула яхăн ертсе пыракан П.П. Давыдовăн сĕнĕвĕ çул кăтартăвĕ вырăннех пулнă.

– Çурта туянма шутларăн пулсан, асту: профильне ан улăштар. Ун пек тумасан, ним ырри те пулмасть.

Платон Павловичăн шухăшĕ тĕп-тĕрĕс пулнине ывăлĕ ăнланчĕ çеç мар. Çакă предприятие рынок хутшăнăвĕсен тапхăрĕнче каялла ура çине тăма пулăшрĕ.

Çук, ăна туянас шухăшпа килменччĕ-ха вăл район центрĕнчи çак çурта. Бизнесра хăйĕн пурнăç çулне тупнăскер, кунта автомобильсен запас пайĕсене сутмалли пӳлĕм валли вырăн арендăна илесшĕнччĕ. Халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен ун чухнехи ертӳçипе Р.В. Павловпа калаçнă хыççăн предприяти йывăр лару-тăрура иккенне ăнланчĕ.

– Кĕçех предприятин урăх хуçа пулать.

– Кам?

– Халльĕхе паллă мар-ха. Эс туян-ха.

Роман Васильевичăн çак сăмахĕсем Александр Платоновичшăн кĕтмен çĕртен пулаççĕ. Анчах та пуçран çав самантрах кăларса пăрахмасть çав шухăша. Предприяти шăпи уçăмлах пулманни камшăн кăмăллă пултăр. Тата Муркаш варринчех лараканскерĕн çапла мĕскĕннĕн лармалла-и?

Анчах ун чухлĕ укçа çук. Çывăх çынсемпе, юлташсемпе каласса пăхрĕ. Вĕсем унăн шухăшне ырлани, пулăшма шантарни вăй пачĕ ăна. Тата асăннă предприяти коллективĕ те ăнланчĕ, шанчĕ ăна. Çав 2004 çулхи майăн 30-мĕшĕнче ирттернĕ пайщиксен пухăвне паллашмалла тенĕ пек ăна чĕнчĕç. Пайщиксен йышĕнчен çурри ытла пуçтарăннă пухура çитес пухун кун йĕркине пайсене А.П. Давыдова сутас ыйтăва кĕртме йышăнчĕç. Тепĕр пухăва пайщиксен 95 процентĕ килчĕ. Пурте пĕр саслăн пулса çӳлерех асăннă йышăнăва турĕç: Александр Платонович çав пухурах асăннă предприятин профильне сыхласа хăварма шантарчĕ.

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.).

РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ ИЮЛĔН 12-МĔШĔ ТĔЛНЕ ВЫЛЬĂХ АПАЧĔ ХАТĔРЛЕС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТНИ

Колонкăсенче: 1. Нумай çул ӳсекен куракăксем çулнă. 2. Утă хатĕрленĕ. 3. Сенаж хывнă. 4. Силос хывнă (процентпа).

Е. Андреев яч. хис.	78	38	19	
"Волга"	88	43	0	
"Восток"	100	140		71
"Герой"	61	25	136	0
ЗАО «Агро-Урожай»	100	100		
К. Иванов яч. хис.	75	14	60	55
Ильич яч. хис.	77	46	100	0
"Колос"	29			
Ленин яч. хис.	73	50	140	0
"Лидер"	45	28	25	0
ГУП ЧР «ПФ «Моргаушская»	125			
"Нива"	62	28	0	
"Оринино"	71	53	80	72
"Передовик"	21	16	36	
"Свобода"	92	27	44	
"Сеятель"	37	38	0	
Суворов яч. хис.	68	31	36	
ООО АФ «Рассвет»	44	25		43
ОАО АФ «Нива»	40			
"Ударник"	99	29	86	0
"Хлебороб"	38	22	0	
Чапаев яч. хис.	54	44		0
"Чемеево"	87	60		55
Чкалов яч. хис.	89	92	0	64
КФХ Михайлов А.Н.	60	63	0	
РАЙОНĔПЕ	**64**	**37**	**45**	**34**

Федераллă çăмăллăхсемпе усă кураксене пĕлме

Çăмăллăх: укçан е соцпакет?

Июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне пирĕн районта 3446 çын федераллă çăмăллăхсемпе усă курать. Вĕсенчен пĕр пайĕ пулăшăва укçан илет, тепĕр пайĕ – социаллă пакет. Пулăшăва укçан социаллă пакет илместпĕр тесе заявлени çырнисене параççĕ.

Укçан пулăшу илекеннисем паян районта 2 пин çын ытла. Ыттисем вара социаллă пакет илеççĕ. Çакăн пирки эпир РФ Пенси фончĕн районти уйрăмĕн тĕп специалистне З.И. ИГНАТЬЕВАНА каласа пама ыйтрăмăр:

– Социаллă пакет шутне,- палăртрĕ Зоя Ильинична, – çак çăмăллăхсем кĕреççĕ:

1. чукун çул çинче çулталăкĕпех тӳлевсĕр çӳресси;

2. çулталăкĕпех врач рецепчĕпе тӳлевсĕр эмел илесси;

3. виçĕ çулта пĕрре тӳлевсĕр путевкăпа канма каясси.

– Зоя Ильинична, кашни çăмăллăх çинче уйрăммăн чарăнса тăрар.

– Илер, акă, чукун çул транспорчĕпе тӳлевсĕр çӳрессине. Ку çăмăллăхпа усă курас текенсене эпир транспорт пулăшăвĕпе тивĕçтермелли ятарлă карточка паратпăр. Вырăсла: карточка транспортного обслуживания. Пирĕн енче чукун çул çук. Апла пулсан ветерансем çак пулăшу вырăнне уйăхсерен 53 тенкĕ укçан илме пултараççĕ.

Иккĕмĕш çăмăллăх – врач рецепчĕпе тӳлевсĕр эмел илесси. Йĕрки кунта унччен-хи пекех. Врач рецепт çырса парать, аптека эмелпе тивĕçтерет. Эмеле чирлĕ çынна кирлĕ чухлĕ уйăраççĕ. Енчен те ветерана çак çăмăллăх тивĕçтермест пулсан, вăл эмелсемшĕн уйăхсерен 424 тенкĕ укçан илме пуçлать. Эмелсене вара тӳлевлĕ илмелле.

Виççĕмĕш çăмăллăх – санаторипе курортра тӳлевсĕр сипленесси, унта транспортпа кайла майла тӳлевсĕр кайса килесси.

Путевкăпа 3 çулта пĕрре тивĕçтереççĕ.

– Зоя Ильинична, федераллă çăмăллăхсемпе усă кураксенчен ытларахăшĕ вĕсене укçан илет, тепĕр пайĕ – соцпакет. Çитес çул валли вĕсен каллех хăйсене килĕшнĕ варианта суйласа илмелле.

– Çапла. Кун пирки уйрăммăн палăртас килет. 2007 çулта соцпакет вырăнне пулăшава укçан илес тесен, кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕччен заявлени çырса памалла. Заявленипе пирĕн пата районти уйрăма килмелле.

Тепĕр саманта та палăртас килет. Федераллă çăмăллăхсемпе усă кураксенчен ытларахăшĕ инвалидсем. Малашне те вĕсен çак пулăшăвах тивĕçес тесен заявлени çырмалла.

Вăхăчĕ нумай мар. Кĕçех октябрь уйăхĕ çитсе те тăрĕ. Çавăнпа та, хисеплĕ ветерансем, хăвăра килĕшнĕ варианта хальтерех суйласа илĕр. Муркаша килсен пенси фончĕн районти уйрăмне кĕрсе тухăр.

А. ТИХОНОВ
калаçнă.

Юбилей

Саламлатпăр

Хаклăран та хаклă çыннăмăра, Анаткас Апаш ялĕнче пурăнакан **Петр Семенович СЕМЕНОВА** 75 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр.

Пурнăçра çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, канлĕ ватлăх сунатпăр.

Юратса саламлаканĕсем: ывăлĕпе хĕрĕ, кинĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем, хăти-тăхлачисем, ял-йыш.